

**Шкул çулне çитмен ачасен «Путене» ача сачĕ» муниципаллă вĕрентӳ учрежденийĕ – 15 çулта**

# 15 çул тултартăмăр эпир

Муркашри «Путене» ача сачĕ 1994 çулхи декабрĕн 4-мĕшĕнче уçăлнă. Унтанпа 15 çул çитрĕ. Çак тапхăрта мĕн чухлĕ ача ăс илмен-ши кунта. Вĕсем хăйсен пурнăç çулĕсене те суйласа илнĕ ĕнтĕ.

«Путене» ача садĕнче пурĕ 52 ĕçчен вăй хурать. Вĕсенчен 30 педагог, аслă воспитатель, музыкăна вĕрентекенсем 3-ĕн тата 25 воспитатель.

Ача садĕнчи вĕрентӳпе воспитани ĕçне 4 тĕп енпе туса пыратпăр. Кусем вĕсем ачасене художествăпа эстетика енĕпе аталанма пулăшасси, ачасене интеллектуаллă аталану парасси, ачасен сывлăхне çирĕплетесси тата харпăр хăйне аталанма майсем туса парасси. Пирĕн тĕп çулйĕрсенчен пĕри – ачасене художествăпа эстетика енĕпе аталанма пулăшасси. Çавна май тăван ен культури çине уйрăмах пысăк тимлĕх уйăратпăр.

Тĕрлĕ конкурссене тăтăшах хутшăнатпăр. Вĕсенче мала тухнисем те сахал мар пулнă. Вĕсем хушшинче халĕ ĕнтĕ аслă шкулсенче вĕренекенсем те чылай.

Пирĕн патра чи пултаруллă та тăрăшуллă воспитательсем ĕçлеççĕ. Ачасене Чăваш Ене, тăван чăваш чĕлхине, чăваш культурине юратма, хисеплеме вĕрентеççĕ ача садĕнче. Вăхăт ыйтнă пек аталанма ача садĕнче пур условисем те çителĕклĕ.

Ачасен сывлăхĕ çирĕп пултăр тесе тĕрлĕ ăмăртусем ирттеретпĕр. Ачасем походсене те каяççĕ, йĕлтĕрпе те чупаççĕ, велосипедпа та ярăнаççĕ. Ку тĕлĕшпе Г.В. Лоцманова воспитатель тăрăшуллă.

Ачасене халăх фольклорĕн юррисене вĕрентессине те йĕркеленĕ. Районти музыка викторининче ачасем 1-мĕш вырăн йышăнма пултарчĕç. Музыкăна юратма ачасене РФ халăха вĕрентес ĕç отличникĕ Г.А. Малясова вĕрентет.

Çавăн пекех кăçалхи выпускник-воспитанниксем çинчен асăнса хăварас килет. Аслă ушкăнри ачасем тĕрлĕ ăмăртусемпе конкурссене хутшăнса яланах малти вырăнсене тухма тăрăшрĕç.

Акă шкул çулне çитмен ачасен пултарулăхĕпе тĕпчев ăсталăхне аталантарас енĕпе 2009 çулхи март уйăхĕнче пĕтĕм Раççейри тĕпчев ĕçĕсен «Эпĕ – тĕпчевçĕ» конкурсне хутшăнса, пирĕн ача сачĕн аслă ушкăнри воспитанникĕсем 2-мĕш вырăн çĕнсе илме пултарчĕç. Конкурса хутшăнма Н.А. Порфирьевапа Т.Д. Толстова воспитательсем питĕ нумай вăй хучĕç. Вĕсем пирки ыррине кăна каламалла.

«Путене» ача садĕнче туслă та пултаруллă коллектив ĕçлет. Кусем вĕсем аслă воспитатель О.З. Троицкая, аслă медсестрасем И.П. Пугачева, М.К. Лукина, воспитательсем И.Г. Кожевникова, Г.В. Тодинова, Э.Б. Федотова, А.А. Григорьева, А.В. Тимофеева, Р.П. Андреева, Л.Ю. Кокуркина, Г.Н. Никифорова, С.Н. Иванова, А.Л. Тихонова, Н.Н. Борисова, А.Ю. Крысина, Н.В. Смелова, П.В. Димитриева тата ыттисем те.

Юлашки çулсенче ачасем ытларах çурални палăрать. Çавăнпа «Путене» ача садне çӳрекен ачасен йышĕ те ӳссе пычĕ, çĕнĕрен те çĕнĕ ушкăнсем йĕркеленчĕç. Паянхи куна илсен, 11 ушкăнра ачасем ăс-тăн пухса аталанса пыраççĕ. Кĕçех 12-мĕш ушкăн уçăлмалла. Ачасемпе ĕçлеме юратакан воспитательсен йышĕ ӳссех пычĕ. Хастар та пултаруллă çамрăк воспитательсем «Путене» ача сачĕн ĕçченĕсен ретне тăчĕç: А.А. Смирнова, О.Ю. Прокопьева, Л.В. Васильева, И.В. Кабуркина, Л.С. Разумова, Л.В. Щукина, Э.Г. Любимова, Л.Н. Егорова. Тем тума та пултарать çамрăк ăру. Ачасене воспитани панисĕр пуçне вĕсем ӳкерме те, интереслĕ япаласем ăсталама та, тĕрлĕ рольсене выляма та, юрлама е ташлама та пултараççĕ.

Хальхи вăхăтра пирĕн ача садне 200 ача çӳрет. Малашне те вĕсен йышĕ ӳссе пырасса шанатпăр.

**И. ФЕРАПОНТОВА,**
**ача сачĕн заведующийĕ.**



**Пирĕн туслă коллектив.**

# Тăван кил пекех

Аттепе анне тахçан каласа панă тăрăх, «Путене» ача сачĕ ӳссе ларнă çĕр çинче вăйлă кантăр, ыраш, тулă, çĕр улми çитĕнтернĕ. Çĕр хăйĕн сĕткенĕпе лайăх çимĕç ӳстерме пулăшнă. Шаптак хуçалăхĕн чи пуян çĕрĕ ял хыçĕнчех вырнаçнă-çке. Хресчен вара тырă вырнă вăхăтра пĕрмене миçе пăт кĕрессе путенесем юрланинчен шутласа пĕлнĕ. Çавăнпа та пуль ача сачĕн ячĕ те «Путене» пулса тăнă.

Çавăн пирки калани те пур. 60-мĕш çулсенче районти вĕрентӳ пайне М.С. Васильев ертсе пынă. Каярахпа вăл Муркаш шкулĕнче математика учителĕ пулса чылай тăрăшнă. Михаил Семенович сĕнĕвĕпе ача сачĕн ятне те панă пулас.

Ача сачĕ чăннипех те пĕчĕккисемшĕн тăван кил пекех. Вĕсем кунта выляççĕ кăна мар, юрлама, ташлама, ĕçлеме, çут çанталăка упрама, пĕр-пĕрне, аслисене хисеплеме те вĕренеççĕ. Çакăнта вĕсене пулăшакансем – воспитательсемпе педагогсем.

Чун-чĕре ăшши паха. Кунти кашни ĕçчен ачасене хăйĕн ачине юратнă пек юратать. Çавăнпах ĕнтĕ ачасем те садике чун туртнипе çӳреççĕ. Çакăнтан лайăххи мĕн пултăр ĕнтĕ кунта ĕçлекенсемшĕн.

**Г. БОРИСОВА.**

# Условисем çителĕклĕ

Пирĕн ача садĕнче ачасене аталанма пур условисем те çитеççĕ. Вылямалли, çывăрмалли пӳлĕмсем çутă та пысăк. Музыкăпа тата физкультурăпа занятисем ирттерме хитре икĕ пысăк зал, картишĕнче ятарлă площадка пур. Ачасен тавра курăмне аталантарас тесе ача садĕнче воспитательсем тăрăшнипе чăвашсен ĕлĕкхи пурнăçне сăнлакан музей йĕркеленĕ. Художество пултарулăхне аталантарассипе ача садĕнче час-часах тĕрлĕ уявсем, вăйă каçĕсем йĕркелетпĕр.

– Ачана ача садне ятарласа та вăл мĕнле çитĕнсе кайнине сиссе те юлаймастăн,– теççĕ ашшĕ-амăшĕсем. Ку вара чăннипех савнашкал. Садикре ача вăхăта интереслĕ те усăллă ирттернипе пĕрлех тĕрĕс воспитани те илет. Çакă вара кунта вăй хуракан воспитательсенчен çав тери нумай килет.

Ача садĕнче аслă воспитатель пулса Ольга Зосимовна Троицкая 2006 çултанпа ĕçлет. Унтанпа садикре пурнăç та лайăх еннелле самай улшăнчĕ. Вăл педагогсен ĕçне-хĕлне тĕрĕс йĕркелесе майлаштарса пырать. Коллективра та ăна хисеплеççĕ, унпа канашлаççĕ.

Пĕлтĕр тата кăçал садикре çĕнĕрен çамрăк специалистсем те ĕçлеме тытăнчĕç. Вĕсен шучĕ те пĕчĕк мар. Мĕншĕн тесен çĕнĕ ушкăнсем уçăлчĕç. Пурте вĕсем тимлĕ, тăрăшуллă, ачасене юратаççĕ.

Çак пысăк коллектива Изабелла Владимировна Ферапонтова ертсе пырать. Вăл ĕçлеме пуçлани 4 çул та иртрĕ. Çак хушăра вăл пысăк ăнăçусем турĕ. Ача сачĕ кăçал районта ачасене воспитани парассипе 1-мĕш вырăнта пырать. Тата нумаях пулмасть И.В. Ферапонтована Раççей Федерацийĕн халăха вĕрентес ĕçĕн отличникĕн ятне пачĕç. Уншăн эпир пурте савăнатпăр, мĕншĕн тесен вăл хăйĕн пĕтĕм вăй-халне ачасене тивĕçлĕ воспитани парас ĕçе парать.

**Г. МАЛЯСОВА,**
**ача сачĕн музыка енĕпе ертсе пыраканĕ.**

# Чун юратнă вырăн, чун ăшши

Епле илемлĕ ят панă пирĕн ача садне. Ача чухнехи юрă сăмахĕсем аса килсе каяççĕ: «Пĕчĕк çеç путене сарă тулла юратать...».

Чăнах та Муркашри 27-мĕш номерлĕ ача садне «Путене» тесе ят панă. Кунта Муркаш ялĕнчи тата çывăх ялсенчи шкул çулне çитмен ачасем çӳреççĕ. Çурчĕ те илемлĕ вырăнта вырнаçнă. Пĕчĕк ачасене таса та сывă çитĕнтерме, тĕрĕс воспитани пама нимĕн те чăрмантармасть. Ачасем пурăнакан пӳлĕмсем хăтлă та çутă. Пурĕ ача садĕнче 11 ушкăн ĕçлет. 12-мĕшне те хута яма хатĕр. Ача садĕнче 28 педагог вăй хурать. Вĕсем пурте тенĕ пекех аслă пĕлӳ илнĕ. РФ халăха вĕрентес ĕçĕн отличникĕ И.В. Ферапонтова, О.З. Троицкая аслă воспитатель ертсе пынипе ача сачĕн пурнăçĕ кал-кал пырать.

Воспитательсем ачасене тĕрлĕ енлĕн аталанма пулăшаççĕ. Ашшĕ-амăшĕсем çак пысăк опыт пухнă, хăйсен ĕçне чунтан парăннă педагогсемпе хăйсен пепкисене шанчăклăн хăвараççĕ. Вĕсем пĕлеççĕ: кунта вĕсем валли пур енлĕн аталанма условисем çителĕклĕ.

Çапах та ашшĕ-амăшĕсем кил-тĕрĕшре, обществăлла ĕçсенче нумай вăй хураççĕ пулин те, ача сачĕ çинчен те манмаççĕ. Ача сачĕн кулленхи пурнăçĕпе интересленсех тăраççĕ, тĕрлĕ мероприятисене активлă хутшăнаççĕ.

Пирĕн ача сачĕ уçăлни 15 çул çитрĕ кăна. Апла пулин те учреждени лайăххисен шутĕнче. Малашне те çапла пуласса шанса тăратпăр.

**А. ТИМОФЕЕВА,**
**1-мĕш категориллĕ воспитатель.**

# Ачасене пирĕн патра килĕшет



Пирĕн ача садĕнчи педагогсем хăйсен воспитанникĕсем анлă тавра курăмлă, çирĕп ăс-хакăллă пулчăр тесе тăрăшаççĕ. Çуралнă вырăна, Тăван çĕршыва юратма пĕчĕкренех хăнăхтаратпăр. Ачасене воспитани парас ĕçре халăх пултарулăхĕн никĕсне малти вырăна хуратпăр. Çапла майпа шкула кайиччен кунта çӳрекен ачасен Чăваш Ене, тăван чăваш чĕлхине, чăвашсен культурине те историне хисеплесси пуçланать.

Садике çӳрекенсем сывлăхлă ӳсчĕр тесе кунта апатланăва та, спорт занятийĕсене те, ӳт-пĕве çирĕплетме пулăшакан вăйă-хусканусене те тăвассине те аван йĕркеленĕ.

Ачасене хитрелĕх тĕнчипе вара ытларах тăван халăх культури урлă паллаштаратпăр. Садикре пĕчĕк музей ĕçлет. Кунта кашни ачанах интереслĕ. Халăх уявĕсем те ирттереççĕ кунта. Музейри «Асаттепе асанне» сăпка юррисем те ачасене юрлама вĕрентеççĕ, чăвашсен кăмакинчен мĕнле апат-çимĕç «тухнине» те кăтартаççĕ. Асанне икерчине тутанма кашни ача кăмăл тăвать.

Тăван ен культурине сăнласа паракан кĕтес те пур ачасем валли. Чăвашсен çипуçĕ те кунта куç умĕнчех. Çак майсемпе усă курса, тĕрлĕ вăйăсем выляса чăвашлăха упрама, юратма вĕренеççĕ ачасем.

2008–2009 вĕренӳ çулĕнче пирĕн патра тăван тавралăха юратма хăнăхтарассипе методпĕрлешӳсем йĕркелесе ирттертĕмĕр. «Кĕтерук аппа патĕнче хăнара» темăпа ăна 1-мĕш категориллĕ воспитатель Э.Б. Федотова, «Хăнана кайни» темăпа Н.В. Смелова воспитатель йĕркелерĕç, Чăваш Республикин темипе «Умницы и умники» интеллектуаллă вăййăна А.Л. Тихонова воспитатель ирттерчĕ.

Ачасем кăна мар, педагогсем те тĕрлĕрен конкурссене хутшăнаççĕ пирĕн патра, малти вырăнсене çĕнсе илеççĕ. Вĕсене хушма пĕлӳ парассипе тĕрлĕ кружоксем йĕркеленĕ. Сăмахран, «Аста алăсем», фольклор кружокĕ, «Çамрăк эколог», «Оригами», «Пӳрнесен вăййисем» тата ыт. те.

Кунсăр пуçне ачасене шкула кайма хатĕрлессипе чылай тимлетпĕр. Ритмика тата акăлчан чĕлхин занятийĕсене ачасем хаваспах çӳреççĕ.

**О. ТРОИЦКАЯ,**
**аслă воспитатель.**

**Сăн ӳкерчĕкре: Н.А. Порфирьева воспитатель тăван ен культурипе паллаштарать.**

# Ташăсен ăсти



***Ача садĕнче вăй хуракан пултаруллă ĕçченсенчен пĕри – О.В. Григорьева. Вăл кунта хореограф пулса ĕçлет. Хăйĕн ĕçне чунне парса, пур кăмăлтан пурнăçлама тăрăшать. Ачасене шкул çулне çитиччен тĕрлĕ хусканусем тума хăнăхтарни, илемлĕ ташă мелĕсене вĕрентни епле пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине аван ăнланать хореограф.***

***Сăн ӳкерчĕкре: О.В. Григорьева ачасемпе черетлĕ заняти ирттерет.***

# Нумай-ши вăл е сахал?



Тĕрĕсех каланă çав пурнăç урапи хăвăрт шăвать тесе. Çак ача садĕнче ĕçлеме пуçланă чухне хамăр та ачасем пекехчĕ çав. «Хăвăр та ача-пăча пекех, хамăрăн пепкесене мĕнле шанса памалла-ши сире?»– тени те пулман мар.

Унтанпа вăхăт сахал мар иртрĕ. Хамăр та ура çине çирĕп тăма пултартăмăр, ĕçленĕ çемĕн опычĕ те хушăнса пычĕ. Пирĕн садикре опытлă воспитательсем сахал мар халĕ. Ытларахăшĕ вĕсенчен садик уçăлнăранпах ĕçлет. Вĕсенчен пĕри вара – Г.А. Малясова **(сăн ӳкерчĕкре)**. Вăл ачасене садикре ташă-юрăна хăнăхтарать, юрлама вĕрентет. Галина Александровна хăйĕн опычĕпе ыттисене паллаштарма та ӳркенсе тăмасть, сĕнӳсемпе те пулăшать. Манăн ăна çак пархатарлă ĕçре малашне те ăнăçусем, ырлăх-сывлăх сунас килет.

**И. КОЖЕВНИКОВА,**
**вăтам ушкăн воспитателĕ.**